# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

105 (7422) № * Юн кун, 2006 çулхи декабрĕн (раштав) 13-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Мал туртăмлисем, шанчăклисем

## Малтисен ретĕнче



*Черетлĕ ял хуçалăх çулĕ вĕçленсе пырать. Мĕнле ĕçпе тата ĕçри ӳсĕмпе вĕçлетпĕр-ха çулталăка? "Ударник" сăнавлă производство хуçалăхĕн Панклинчи сĕт ферминче 5-мĕш çул вăй хуракан Галина Леонтьевна Васильева доярка та паян çак ыйтуран аякра тăмасть. Вăл 31 ĕнерен тăракан ушкăнти 23 ĕнене сăвать. Хăй ĕçĕшĕн ответлăха туяканскер, кашни ĕне патнех тимлĕх çитерет. Çак ĕнесенчен вăл иртнĕ çул кашнинчен 5 пин ытла сĕт сунă пулсан, кăçал та çав ӳсĕме хăвалать. Вуннĕр уйăхра Галина Леонтьевна хăй ушкăнĕнчи ĕнесенчен кашнин пуçне 4478 килограмм сĕт сунă. Фермăри вăтам кăтарту вара – 4131 килограмм.*

Район администрацийĕнче

## Ĕçре палăрнисене чыс та мухтав

Район администрацийĕн пуçлăхĕн чӳк уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 545 тата 546 номерлĕ йышăнăвĕсемпе ĕçре палăрнисене ĕç коллективĕсем ыйтнипе район администрацийĕн Хисеп грамотисемпе наградăланă. Çак хисепе район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ тата халăха вĕрентес ĕçри районти профсоюз организацийĕн Канашĕ, "Муркашри тĕп больница" муниципаллă сывату учрежденийĕ, чикĕллĕ яваплăхлă "Лидер" агрофирма" общество, "Моргаушская" МСО" хупă акционерлă общество тата Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн администрацийĕ, районти шалти ĕçсен пайĕн коллективĕ, РФ Перекет банкĕн Муркашри 7034 номерлĕ пайĕ сĕннипе "Моргаушская" МСО" хупă акционерлă общество директорĕн çумĕ **Геннадий Степанович АБРОСЕЕВ**, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи ялсен аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн тата обществăлла ĕçре активлă пулнăшăн **Петр Васильевич ВОРОБЬЕВ**, чикĕллĕ яваплăхлă "Лидер" агрофирма" обществăн тĕп зоотехникĕ **Галина Владимировна ГРИГОРЬЕВА**, "Муркашри тĕп больница" муниципаллă сывату учрежденийĕн врач-педиатрĕ **Лилия Григорьевна ЖУКОВА**, "Очăкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул" муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕн директорĕ **Фаина Аркадьевна МАТВЕЕВА**, Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин Муркаш районĕнчи халăхăн социаллă хӳтĕлев пайĕн пуçлăхĕ **Нина Пантелеевна ПЕТРОВА**, территори милици пункчĕн пуçлăхĕ **Вениамин Михайлович МАКСИМОВ**, уголовнăй шырав уйрăмĕн оперуполномоченнăйĕ **Михаил Мефодьевич МЯСНИКОВ**, айăпланакансене вăхăтлăх тытакан изолятор милиционерĕ **Вячеслав Владимирович НОВИКОВ**, патрульпе пост службин взвочĕн отделени командирĕ **Виталий Михайлович СЕМЕНОВ**, шалти ĕçсен пайĕн тĕп бухгалтерĕ **Любовь Вячеславовна ЩУКИНА**, РФ Перекет банкĕн Муркашри 7034 номерлĕ пайĕн операци уйрăмĕн аслă кассирĕ **Маргарита Николаевна ЕФРЕМОВА** тата операци уйрăмĕн контролерĕ **Людмила Юрьевна МЯСНИКОВА** тивĕçнĕ.

Раççейре

## Ачасемшĕн тӳлекен пособисем ӳсеççĕ

РФ Президенчĕ Владимир Путин ачаллă çемьесене патшалăх енчен пулăшасси çинчен калакан саккуна иртнĕ эрнере алă пуснă.

Унпа килĕшӳллĕн 2007 çултан ачана çулталăк çурă тултариччен пăхнăшăн уйăхсерен паракан пособие 700 тенкĕрен 1500 тенке çити ӳстереççĕ. Ку укçана пĕрремĕш ачашăн тӳлеççĕ. Иккĕмĕш е виççĕмĕш ачасемшĕн 3000 тенкĕ параççĕ. Е çак сумма ĕç укçин 40 процентĕпе танлашма пултарать. Анчах уйăхри пособи виçи 6000 тенкĕрен пысăк пулмалла мар.

Ачана çемьене усрава, пăхма илекенсене пĕр хутчен 8000 тенкĕлĕх пособи параççĕ. Ача çуратсан та çак суммăнах уйăраççĕ.

Ачасене садике янăшăн ашшĕ-амăшне компенсаци тӳлессине те улшăнусем кĕртнĕ.

Çĕнĕ рубрика

## Манăн килти хушма хуçалăх

**Ял çынни паян килти хушма хуçалăхпа пурăнать. Ку никамшăн та вăрттăнлăх мар. Юлашки вăхăтра патшалăх çакна ăнланса килти хушма хуçалăха аталантарасси çинĕ тимлĕ пăхма пуçларĕ.**

**Акă, пирĕн районта кăçал килти хушма хуçалăха аталантарма116 миллион та 706 пин тенкĕ çăмăллăхлă кредитсем панă.**

**Епле аталанать паян килти хушма хуçалăх? Ял çыннисене калаçăва чĕнетпĕр. Килти хушма хуçалăха тытса тăракансенчен çырусем кĕтетпĕр. Епле ĕçлесе пыратăр, йывăрлăхсене мĕнле çĕнтеретĕр? Тупăшлă ĕçлеме майсем пур-и? Ял çыннисем сире ăмсанмаççĕ-и? Текстпа пĕрле сăн ӳкерчĕксем пулсан тата аван.**

**Килти хушма хуçалăха ăнăçлă аталантарни çинчен калакан çырусене райхаçатра "Манăн килти хушма хуçалăх" рубрикăпа çитес çул уйăхран уйăха пичетлесе пырăпăр. Уйрăмах интереслĕ материал авторне хаклă парне – тĕслĕ телевизор – кĕтет. Парнене районти ял хуçалăх управленийĕ уйăрма пулчĕ.**

**Çĕнтерӳçĕне ятарлă комисси çитес çул вĕçĕнче палăртĕ. Комиссие район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов ертсе пырать.**

**РЕДАКЦИ.**

Çитĕнӳ

## Муркаш çамрăкĕсен – 3 кубок

2006 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнче Шупашкарти агрегат завочĕн Культура çуртĕнче предприятисемпе организацисенче çамрăксемпе ĕçлессине епле йĕркеленине палăртассипе республика конкурсĕ иртнĕ. Пирĕн район командисем унта 3 кубок çĕнсе илме пултарнă. Çĕнтерӳ çулĕ çăмăл пулман. Районти тĕп больницăн, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн тата Муркаш райповĕн командисем ăмăртăвăн 3 тапхăрĕнче те палăрма пултарнă: ноябрĕн 10-мĕшĕнче районти ăмăртура, ноябрĕн 16-мĕшĕнче Çĕмĕрле хулинче зонăри ăмăртура тата Шупашкарта финал ăмăртăвĕнче.

Çамрăксен районти тĕп больницăн команди «Вĕрентӳ тата социаллă сфера» номинацире, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн команди «Промышленность» номинацире, Муркаш райповĕн команди «Суту-илӳ, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессИ тата уйрăм çын предпринимательстви» номинацире çĕнтерӳçĕсем пулса тăнă.

Малашне вара çамрăксене çĕнĕ ĕçсем, çĕнĕ конкурссем, паллă ĕнтĕ, çĕнĕ çитĕнӳсем кĕтеççĕ!



Шкул пурнăçĕ

## Шкул автобусĕ канмасть

Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров вĕренӳ пирки каланă чухне яланах: "Шкул атобусĕсен пĕр вырăнта тăмалла мар, ачасене пĕрмаях тĕрлĕ театрсене, выставкăсемпе экскурсисене илсе çӳремелле", – тет.

Чуманкасси шкулĕнче вĕренекенсене турттаракан автобус вара яланах çул çинче теме те пулать. Районти тĕрлĕ мероприятисене кăна çӳремелле местпĕр эпир автобуспа. Акă, кĕркуннехи каникул вăхăтĕнчех çĕр улми пуçтарма лайăх хутшăнакан ачасем пурте тенĕ пекех Шупашкар хулине кайса килчĕç.

Пиллĕкмĕш классем тĕп хулари хăшпĕр вырăнсемпе паллашрĕç, асăнмалăх Лакрей вăрманĕнче канчĕç. Çиччĕмĕшсемпе саккăрмĕшсем вара ăçта кăна çитмерĕç пуль! Ытларах вĕсене вырăс драма театрĕнче пăхнă "Без вины виноватые" спектакль килĕшрĕ. Ачасем Пултарулăх керменĕнче те пулчĕç, кунти выставкăсемпе хаваслансах паллашрĕç вĕсем. Тăххăрмĕш класра вĕренекенсем хăйсен умне тепĕр тĕллев лартрĕç: Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче пулса курасси, унпа тĕплĕнрех паллашасси. Кунта çитмен кĕтес те хăвармарĕç пуль вĕсем. Çуркуннехи экзаменсем валли хатĕрленме кирлĕ кĕнекесем туяннăшăн питĕ савăнчĕç тăххăрмĕшсем. Аслă классенчи яшсемпе хĕрсем вара каникулăн пĕрремĕш кунĕнчех "Апельсин каччисен" концертне курчĕç. Пурте савăнăçлăн канса килчĕç хуларан.

Çитес вăхăтра кĕçĕн классенче вĕренекенсем те Шупашкара çул тытĕç. Вĕсем илсе каяççĕ-ши пире, тесе пĕрре те шикленмеççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн шкул администрацийĕ хăйĕн сăмахне яланах тытать, пурнăçлать те.

**О. ПАВЛОВА, А. ПЕТРОВА.**

Чуманкассинчи вăтам шкул.

Çырăнтару-2007

## Район хаçачĕсĕр ан юлăр

***Вулакансене çавна аса илтеретпĕр. Хаçат-журнал çитес çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтармалли кампани вĕçленсе пырать. Апла пулсан вара хăвăра килĕшекен хаçат-журнала кая юлмасăр çырăнма тăрăшас пулать.***

***Хаçатсене çырăнтарасси ĕнерхи кун тĕлне çапла: «Хыпар» хаçата районĕпе 686, «Советская Чувашия» хаçата 412, «Чăваш хĕрарăмне» 552, «Çамрăксен хаçатне» 412, «Тантăш» хаçата 90, «Кил-çурт, хушма хуçалăха» 1741 экземпляр сарнă.***

***Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата хальлĕхе 2500 экземпляр çырăнтарнă. Район пурнăçĕпе туллин паллашса пырас тетĕр пулсан, çитес çул валли те «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илĕр.***

Çĕнĕ çул умĕнхи турнир

## Шашкăлла выляма чĕнетпĕр

Районти "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçат редакцийĕ шашкăлла выляссипе Çĕнĕ çул умĕнхи турнир ирттерет. Ăна яланхи пекех райхаçат редакцийĕнче ĕçленĕ, шашка вăййине сарассипе нумай тимленĕ М.П. Авдеева халаллатпăр.

Çĕнтерӳçĕсене хĕрарăмсемпе арçынсем хушшинче палăртатпăр. Пĕрремĕш вырăна тухнисем район хаçачĕн куçса çӳрекен кубокĕсене тата дипломсене тивĕçеççĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене çĕнсе илнисем – дипломсене тата асăнмалăх парнесене.

Ăмăртусем кăçал декабрĕн 23-мĕшĕнче пулаççĕ. Вĕсем район хаçачĕн редакцийĕнче 10 сехетре пуçланаççĕ. Шашка вăййине кăмăллакансене пурне те ăмăртăва йыхравлатпăр.

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**

Район çыннисене пĕлме

## Номерте – документсем

**Паянхи номерăн 2 – 3-мĕш стр. депутатсен районти Пухăвĕн декабрĕн 1-мĕшĕнчи черетлĕ 15-мĕш ларăвĕн решенийĕсене пичетлетпĕр.**

**Документсем пичетленĕ кунран вăя кĕреççĕ.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Хамăрăн хисеплĕ те юратнă мăшăра, пархатарлă аттепе хуньстарике, ăшă кăмăллă кукаçипе асаттене, ырă кăмăллă пиччене, тараватлă куккана, хаклă хăтана тата тăванăмăра – Çĕньял-Хуракасси ялĕнче пурăнакан тата çамрăкранах ĕç ĕмĕрне "Свобода" хуçалăхпа çыхăнтарнă **Виталий Леонтьевич ЯКИМОВА**, çынна яланах ăнланнишĕн, нихăçан та нимĕнле ĕçрен те хăраса тăманнишĕн тата тăвансемпе, ял йышпа, ĕçтешсемпе хисеплĕ те уçă кăмăллă пулнишĕн 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Ĕмĕрĕнче ку таранччен туса ирттернĕ ырă ĕçĕсемшĕн çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр.

Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, тĕллевӳсем те пурнăçланччăр. Сывлăхпа телей, ăнăçу, çывăх тăванусен юратăвĕ, мăнукусен хаваслă кулли санăн пурнăç çулне вăй парсах тăччăр. Ачăрсемпе мăнукăрсен телейĕ саншăн чи пысăк парне пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрĕвĕ, ывăлĕпе кинĕ, 3 мăнукĕ, тăхлачи, хăти, çывăх тăванĕсем.**

Конкурс çĕнтерӳçисем

## В. Басяев чи лайăххисен шутĕнче

Пирĕн районти Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕн тĕп врачне Владимир Басяева халĕ пирĕн районта е республикăра кăна мар, пĕтĕм Раççейĕпех лайăх пĕлеççĕ.

Нумаях пулмасть Мускавра иртнĕ «Сывлăх сыхлавĕ – 2006» куравра «Пĕтĕмĕшле практикăн чи лайăх çемье тухтăрĕ» Раççей конкурсĕн çĕнтерӳçисене палăртнă. Шăпах çавсен шутĕнче пулнă та Владимир Басяев. Асăннă конкурсăн чи хисеплĕ ятне илме тивĕçнĕ 15 çул тĕп тухтăрта тăрăшакан ентешĕмĕр.

Çĕнтерӳçĕсене декабрĕн 4-мĕшĕнче сывлăх сыхлавĕн пĕтĕм тĕнчери 16-мĕш выставкине уçнă чухне саламланă. Пирĕн ентеше Сеченов ячĕпе хисепленекен медицина академийĕн академикĕ, вăлах Раççейри пĕтĕмĕшле практика врачĕсен ассоциацийĕн президенчĕ И.Н. Денисов, пĕтĕмĕшле практика врачĕсен ассоциацийĕн исполнительнăй директорĕ Е.И. Черниенко саламланă, асăнмалăх парне парса хавхалантарнă.

**Хамăр инф.**